# МĔН – ШИ ВĂЛ ТĂВАН ÇĔРШЫВ?

- **Чăваш Республики вăл – пирĕн Тăван çĕр-шыв.**
- **Тăван çĕр-шыва пирĕн юратмалла. Вăл пуян, хитре пултăр тесе тăрăшмалла.**

# Чăваш Республикин Гимнĕ

1. Çурхи тĕнче вăраннă чух.
Хаваслă кун шăраннă чух
Чун савăнать, чĕре сикет
Çĕршывăм çинчен юрлас килет.

Тăван çĕршыв,
Тăван çĕршыв,
Асран кайми
Юратнă çĕршыв.
Тăван çĕршыв,
Тăван çĕршыв,
Мухтав сана,
Çуралнă çĕршыв!

2.Яшсем-хĕрсем выляннă чух,
Атте-анне ăс панă чух
Чун савăнать, чĕре сикет,
Татах та нумай пурнас килет.

3.Тăвансемпе пĕрлешнĕ чух,
Чăваш тĕнчи çĕкленнĕ чух
Чун савăнать, чĕре сикет,
Татах та хастар пулас килет.




1. Эпир мĕнле республикăра пурăнатпăр?
2. Чăваш Республики ăçта вырнаçнă?
3. Республикăн тĕп хули мĕн ятлă?
4. Раççейĕн тĕп хули мĕн ятлă?
5. Чăваш Республикинче миçе хула?
6. Пирĕн республикăн ялавĕ мĕн тĕслĕ?
7. Эпир пурăнакан хула мĕн ятлă?








Чӑваш Республикинче тӑхӑр хула: Шупашкар (**442** пин ҫын), Ҫӗнӗ Шупашакар (**121** пин ҫын), Канаш (**57** пин ҫын), Улатӑр (**48** пин ҫын), Ҫӗмӗрле (**43** пин ҫын), Куславкка (**13** пин ҫын), Сӗнтӗрвӑрри, (**11** пин ҫын), Ҫӗрпӳ (**11** пин ҫын), Етӗрне (**11** пин ҫын).

# Ҫĕнĕ Шупашкар - Новочебоксарск

**Ҫĕнĕ Шупашкар – республикăри хуласенчен чи ҫамрăкки. Хула Атăл хĕрринче, Шупашкартан 10 ҫухрăм анатарах вырнаҫнă.**



# КАНУ САМАНЧЁ



# КАНУ САМАНЧĚ



# Хисеп ячӗсем

23 1960 101

345 2010 3100

69 12372 178

Ҫӗнӗ Шупашкара 1960 ҫулта никӗсленӗ.

Ҫӗнӗ Шупашкара 1965 хула ятне панӑ. Кунта тӗрлӗ халӑх ҫыннисем пурӑнаҫҫӗ: чӑвашсем, вырӑссем, тутарсем, ҫармӑссем, украинецсем, еврейсем тата ыттисем те.






- Çĕнĕ Шупашкар республикăн чи илемлĕ, чи хăтлă хулисенчен пĕри.
- Хулара Атăл çинче ГЭС туса хута янă.
- ГЭС плотини 4 çухрăм тăсăлать.



